# ХУСАНКАЯ ХАЛАЛЛАСА

Хусанкайăн пахчи - чăн поэзи арчи -
Тыткăнлать чăваша, тутара, вырăса.
Вăл çырни Пăлхарта, Францире - чун сăпки,
Янăрать тăванла чĕлхене çаврăнса.

Аптраманăн йăхне - ыр чăвашăн ятне -
Шăнăçтарчĕ савса мăн тĕнче анине:
Тухăçпа анăçа, кăнтăрпа çурçĕре
Çул хывса, хĕвел пек ăшăтса пур çĕре.

Ун хăватлă сасси - авалхи чан сасси,
Мехел çитессе ĕненни, чун кÿтни.
Ун кĕвви - хăйне евĕр патшалăх кĕвви,
Çĕнĕ ĕмĕр юрри, чун кĕтни.

Хусанкай çырнисем - ахахран хаклисем -
Çамрăка, ваттине сăмахпа чĕртнисем.
Пин çултан та вĕсем чи паха парнесем
Вырăнне юлаççех чун патне çитнисем.

Галина ХЛЕБНИКОВА,
Патăрьелĕнчи 2-мĕш вăтам шкул вĕрентекенĕ.